25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 26 ШАМАТКУН 225 (6160) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет патриочӗсем Октябрь уявӗ ячӗпе хатӗрлекен парнесем

Пирӗн чӑваш халӑхӗ хӑйӗн паттӑр ывӑлӗсемпе—Совет Союзӗн Геройӗсемпе—Габайдулин, Орлов, Васильев, Ефимов юлташсемпе тивӗҫлипе мухтанать. Фронтри воинсен паттӑрлӑхӗпе хавхаланнӑ ӗҫҫыннисем тылра тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ, фронта валли хӗҫпӑшалсем, апат-ҫимӗҫсем, тумтирсем ытларах та ытларах парса тӑма тӑрӑшаҫҫӗ. Августпа сентябрь уйӑхӗсенче кӑна пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли кӗрӗк пиншаксем, алсасем, ҫӑматӑсем, чӑлхасемпе алшишсем нумай хатӗрлесе пачӗҫ. Совет тылӗ фронт мӗн ыйтнине ҫителӗклӗ таран парса тӑма тӑрӑшать. Совет халӑхӗ Октябрьти революцире ҫӗнсе илнӗ хӑйӗн ирӗклӗхне сыхласа хӑварассишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешет, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшса пырать.

Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарнине совет халӑхӗ нимӗҫсен фашистла ҫарӗсене хирӗҫ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра кӗтсе илет. Ҫак вӑхӑтра пирӗн ҫӗршыв йывӑр та хӑрушӑ кунсене пурӑнса ирттерет. Тӑшманӑн йыткӗтӗвӗсем нимӗнле ҫухатусем тӳснине пӑхмасӑр, хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем тӑрӑх утса, нимӗҫ захватчикӗсем аслӑ Атӑл ҫине тухма, Кавказа туртса илме тӑрмашаҫҫӗ. Пирӗн тӑван ҫӗршыв умне тухса тӑнӑ хӑрушлӑха сирсе ярас тесе, совет воинӗсем вӗсене шаннӑ рубежсене хӳтӗленӗ ҫӗрте юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫаҫҫӗ, пирӗн ӗҫҫыннисем тылра хӑйсен пурнӑҫӗсене шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура планран ирттерсе туса кӑларнӑ кашни япала фашистсене хытӑрах ҫапма пулӑшать. Ӑмӑртӑва хутшӑнса ӗҫленипе хӗҫпӑшал, апат-ҫимӗҫ ытларах туса хатӗрлени вӑл—Октябрь уявӗ ячӗпе ҫӗршыва паракан парне.

Октябрь уявне кӗтсе илме хатӗрленнӗ май Шупашкарти чӑлха ҫыхакан фабрикӑн коллективӗ фронтовиксем патне праҫник ячӗпе парнесем яма йышӑнчӗ, пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисене пурне те Октябрь уявӗ ячӗпе парнесем пухса яма чӗнчӗ.

«Орденлӑ Чӑваш республикинчи мӗнпур ӗҫҫыннисене эпир Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем валли Октябрь уявӗ ячӗпе уйрӑмшар тата коллективлӑ парнесем пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнма чӗнетпӗр» тесе ҫыраҫҫӗ чӑлха ҫыхакан фабрикӑри рабочисемпе работницӑсем тата служащисем.

Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем ҫак чӗнӗве хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче чылайӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем хатӗрлеме тытӑнчӗҫ. Сӑмахран, Калинински районри «Смычка» колхоз членӗсен пухӑвӗ Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли 20 килограмм сысна какайне, 10 чӑх какайне, 2 сысна ҫури какайне типӗтсе, 40 килограмм шурӑ сухари, 100 килограмм типӗтнӗ ҫӗрулми, 3 литр эрех, 10 килограмм пыл ярса пама йышӑннӑ. Вӗсем ҫак ӗҫе октябрӗн 2-мӗшӗччен туса ӗлкӗртме шутлаҫҫӗ. Ытти районсенчи колхозсем те чылайӗшӗ парнесене хатӗрлеме тытӑннӑ. Рабочисем, служащисем тата колхозниксем харпӑрхӑйӗн уйрӑм посылкисене хатӗрлеҫҫӗ.

Анчах, хӑшпӗр районсенче Октябрь уявӗ ячӗпе парнесем хатӗрлес ӗҫе вӑрахӑн тытӑнаҫҫӗ-ха. Ҫӗрпӳ, Сӗнтӗр, Ишлей районӗсенчи колхозсенче чӑлха фабрикин коллективӗн чӗнӗвне паянхи кунччен те сӳтсе-явман. Партипе советсен ҫав районсенчи организацийӗсем Октябрь уявӗн парнисене хатӗрлес тӗлӗшпе массӑсене ӑнлантарса парас ӗҫе кирлӗ пек йӗркелемен. Уйрӑм колхозсенчи ҫынсем кун ҫинчен халиччен те пӗр сӑмах та илтмен.

Паллах ӗнтӗ, ку ыйтупа массӑсем хушшинче ӑнлантару ӗҫне анлӑн сармалла. Партипе комсомол организацийӗсен, агитаторсен халӗ Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне парнесем ярса парасси ҫинчен кашни ӗҫҫыннине ӑнлантарса парас пулать. Праҫник ячӗпе совет воинӗсене парнесем ярса пани мӗн пек пархатарлӑ ӗҫ пулса тӑнине кашни совет ҫынни ӑнланса илтӗр, парнесем ярас ӗҫе хутшӑнтӑр.

Совет Союзӗн Геройӗ Г. Габайдулин юлташ хӑйсен ялӗнчи митингра тухса каланӑ сӑмахра колхозниксемпе колхозницӑсене пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пур енчен те пулӑшса пыма чӗннӗ. Н-ски чаҫран пирӗн республикӑна килнӗ фронтовиксем те пирӗн ӗҫҫыннисене фронта валли ытларах та ытларах хӗҫпӑшалсем, апат-ҫимӗҫсем туса пама чӗнчӗҫ. Ҫав чӗнӳсене асра тытса, эпир хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫар тата тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫлӗ ӗҫсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр.

Хисеп хӑми

ВКП(б) Хӗрлӗ Чутай райкомӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен райсовечӗн исполкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртес ӗҫре пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата пахалӑхлӑ ӗҫленӗшӗн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

106. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи **В. И. Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **А. В. Васильев** юлташ). Колхоз тӗштырӑ культурисене пухса кӗртсе капана хывас ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса пӗтернӗ, 50 процент ытла авӑн ҫапнӑ. Государствӑна тырӑ парассине, ҫавӑн пекех тата ҫӗрулми тӑратассине те ӑнӑҫлӑн туса пырать. Колхоз тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе ӗрчетес ӗҫпе килӗшӳллӗ ҫыхӑнтарса пырать. Август уйӑхӗнче фермӑсем валли: 12 пӑру тата 24 путек сутӑн илнӗ.

107. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи **ВКП(б) ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Ф. И. Гурьянов** юлташ). Колхоз тӗштырӑ культурисене лайӑх пахалӑхпа пухса кӗртсе капансене ӑнӑҫлӑн хывса пӗтернӗ. Вӑл кӗрхи тырӑсене районра чи малтан акса пӗтернӗ. Государствӑна тырӑ парассине, ҫавӑн пекех тата ҫӗрулми тӑратассине те ӑнӑҫлӑн туса пырать. Колхоз тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе ӗрчетес ӗҫпе килӗшӳллӗ ҫыхӑнтарса пырать. Август уйӑхӗнче фермӑсем валли 6 пӑру тата 34 путек сутӑн илнӗ.

108. **Яков Архипович Степанов** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Совет» колхозра пахалӑх енӗпе ӗҫлекен инспектор. Степанов юлташ колхозра ялхуҫалӑх ӗҫӗсене мӗнле пахалӑхпа туса пынине яланах асӑрхаса тӗрӗслесе пырать, вӑл хушнипе колхозра 56 гектар ҫинче тӑкӑнса юлнӑ пучахсене тепӗр хут пуҫтарса тухнӑ.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫе вӑйлатмалла

ВӐРМАР. (Хамӑр корр.). Районра малта пыракан колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫлесе пыраҫҫӗ. Кивӗ Мӑратри Молотов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Андреев юлташ) сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ памалли обязательствине тултарнӑ, Хӗрлӗ Ҫар валли тӗштырӑ фончӗ тунӑ ҫӗре 3 центнер тырӑ панӑ, МТС ӗҫлесе панӑшӑн тӳлемелли натуроплата тыррине парса татнӑ. Ҫавӑн пекех «Атнаш» колхоз та государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна ҫак кунсенчех пурнӑҫлать.

Анчах та, районӗпе илсен, государствӑна тырӑ парас ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать-ха. Сентябрӗн 28-мӗшӗ тӗлне район государствӑна памалли обязательствӑна 65 процент ҫеҫ тултарнӑ, натуроплата тыррине 48 процент кӑна панӑ. Чылай колхозсем государствӑна тырӑ леҫес ӗҫӗн пилӗккунлӑх графикӗсене пурнӑҫласа пымаҫҫӗ. Сентябрӗн 21-мӗшӗнче районри 55 колхозран 10 колхоз ҫеҫ государствӑна тырӑ панӑ, ыттисем заготзерно пунктне пӗр лав тырӑ та яман.

Малтанхи кунсемпе танлаштарсан, государствӑна тырӑ тӑратас ӗҫ юлашки кунсенче ӳсес вырӑнне чакса пыни сисӗнет.

Государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе уйрӑмах единоличниксем япӑх ӗҫлеҫҫӗ. Энӗшпуҫ, Энтрипасар, Ҫӗнӗ Мӑрат, Пӑвакасси, Чупай ялсовечӗсенчи единоличниксем государствӑна нимӗн чухлӗ те тырӑ паман-ха. Государствӑна тырӑ парас ӗҫе кая хӑварма юрамасть. Обязательствӑсене кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫламалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Авӑн ҫапса пӗтереҫҫӗ

КУКЕҪ. «Молния», «11 лет Октября», Шурккa ялсоветӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан, «Красная заря» тата ытти хӑшпӗр колхозсем авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ. Малта пыракан фабрикӑсемпе заводсен примерӗпе Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, районри чылай колхозсем авӑн ҫапас ӗҫе хӑвӑрт вӗҫлессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Авӑна молотилкӑсемпе те, алӑпа та хӑвӑрт ҫапса пыраҫҫӗ. «Знамя революции», «Коминтерн», «Челюскинец» колхозсем авӑн ҫапас ӗҫе ыран-паянах вӗҫлеҫҫӗ.

Районӗпе илсен, сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пурӗ 9.101 гектар ҫинчи тырпула ҫапса пуҫтарса кӗртнӗ.

Е. ОЗИКОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Кӗрхи ҫӗртмене срокра туса хӑварар

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ «1942 ҫулта кӗрхи ҫӗртме тумалли государство планне пурнӑҫласси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени тӑрӑх районри колхозсен кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫе октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне вӗҫлемелле. Постановление пурнӑҫласа пырса, районри малта пыракан «Социализм», Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем паянхи куна 75—80-шар гектар сухаларӗҫ. «Волга» колхоз кӗрхи ҫӗртмене 22 гектар, Винокуров ячӗпе тӑракан колхоз 28 гектар тунӑ. Ӗҫӗн пахалӑхӗ те лайӑх.

Анчах та районри чылай колхозсем кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫре кая юлса пыраҫҫӗ. «Осоавиахим», «Новый быт», «Молния», «Красная Чувашия», «Коммунар» колхозсем кӗрхи ҫӗртме сухине тума паян кун та тытӑнман. Вӗсем района ӗҫре каялла туртаҫҫӗ. Кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫе октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне вӗҫлессишӗн пур колхозсен те ҫине тӑрса кӗрешмелле.

В. НИКИТИН.

Ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетмелле

ЙӖПРЕҪ. Ҫӗнӗ Чураш ялсоветне кӗрекен колхозсенче тырпулсене вырса пухнӑ хыҫҫӑн халӗ кӗлтесене капана хывас, авӑн ҫапас, ҫӗрулми кӑларас ӗҫсене пысӑк хӑвӑртлӑхпа туса пырас вырӑнне ӗҫре сӳрӗклӗх палӑрать. Ялсоветӗнчи пур колхозсенче те кӗлтесене капана хывас ӗҫе питех те начар организациленӗ. Ӗнерхи куна «Ударник» колхозӑн уйӗнче капана хывман кӗлтесем татах та 150 гектар ытла, «Чувашия» колхозӑн уйӗнче 200 гектар, «Красный партизан» колхозӑн уйӗнче 126 гектар шутланнӑ. Ӗҫре кая юлса пынин сӑлтавӗ колхоз председателӗсем ӗҫе кирлӗ пек ертсе пыманнинче. Лашасемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ, хӑшпӗр колхозниксем ӗҫе пачах тухмаҫҫӗ. «Ударник» колхоз ҫеҫ авӑн ҫапма тытӑннӑ. Кунта та молотилка япӑх ӗҫлет, час-часах чарӑна-чарӑна ларать. «Чувашия», «Красный партизан» колхозсенче, МТС молотилкине кӗтсе, авӑн ҫапма пачах тытӑнман.

Ҫавӑн пекех ку колхозсенче ҫӗрулми кӑларас, техникӑллӑ культурӑсене пуҫтарса тирпейлес ӗҫ те кая юлса пырать. Ялсовет исполкомӗн председателӗ И. Яргаев юлташ енчен колхозсене ертсе пыни курӑнмасть.

Д. МИХАЙЛОВ.

ТАСС опроверженийӗ

Берлинри тата Вишири радиосем ҫакӑн пек хыпар сарнӑ: Совет Союзӗн Варнӑри консульствине Болгари правительстви консульствӑра ухтару тунӑ чухне консульствӑна «варалакан материалсем тупнӑ пирки» хупса лартнӑ пулать.

ТАСС ҫакна пӗлтерме полномочи илнӗ: ҫав хыпар вӑл провокациллӗ суя хыпар пулса тӑрать.

Совет правительстви Варнӑри консульствӑна 1942 ҫулхи сентябрӗн 5-мӗшӗнчех хупмалла тунӑ. Ун ҫинчен Болгари правительствине Совет Союзӗн Софири посланникӗ урлӑ ҫавӑн чухнех пӗлтернӗ тата ун ҫинчен ҫак ҫулхи сентябрӗн 7-мӗшӗнче Болгарин ССР Союзӗнчи посланникне те пӗлтернӗ. Болгари полицийӗ консульствӑна хулиганла тапӑнса йӗркесӗр хӑтланни тата консульствӑн кассине хӗҫпӑшалпа ҫаратса тухни—сентябрӗн 15-мӗшӗнче пулса иртнӗ ӗҫ, урӑхла каласан Болгари полицийӗн ҫав ӗҫӗ вӑл—Совет правительстви консульствӑна хупма решенине йышӑннӑранпа чылай вӑхӑт иртсен тин пулса иртнӗ япала пулса тӑрать.

Чыс та мухтав паттӑр земляка!

Совет Союзӗн Геройӗ Г. Г. Габайдулин тӑван ялӗнче

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Тукайри «Первое августа» ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем нихҫан та паянхи пек савӑнӑҫлӑ пулман. Паян хӑйӗн тӑван ялне Совет Союзӗн Геройӗ Геннадий Габайдулович Габайдулин юлташ таврӑннӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем, паха тумланса, клуба пурте пӗр харӑс пухӑнчӗҫ.

Клуб сцени ҫине Совет Союзӗн Геройӗ Габайдулин юлташ, колхоз председателӗ Капитов, партин Комсомольски райкомӗн секретарӗ Георгиев юлташсем тухаҫҫӗ.

Совет Союзӗн Геройӗ Габайдулин юлташпа тӗл пулма пухӑннӑ колхозниксен митингне Капитов юлташ уҫать.

Трибуна ҫинче Габайдулин юлташ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хавасланса алӑ ҫупса ӑна саламлаҫҫӗ. Габайдулин юлташ хӑйне пӑхса ӳстернӗшӗн Ленин—Сталин партине, совет правительствине, мӗнпур ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне Сталин юлташа, хӑйӗн землякӗсене пурне те тав тӑвать. Вӑл ӑнланмалла чӗлхепе пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ геройла ҫапӑҫни ҫинчен каласа парать.

— Пирӗн ҫӗршыв йывӑр та хӑрушӑ кунсене пурӑнса ирттерет. Тӑшман Сталинградалла, Кавказалла тапӑнса пырать. Тӑшман ҫӗлен пек шӑвать, малаллах тапӑнса килме пӑхать. Ҫав ирсӗр тӑшмана хирӗҫ пирӗн Хӗрлӗ Ҫар паттӑррӑн кӗрешет. Эпир тӑшмана малалла ямӑпӑр! тет вӑл хӑйӗн тӑван ял ҫыннисем умӗнче тупа туса.

Юлашкинчен Габайдулин юлташ колхозниксемпе колхозницӑсене ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хӑвӑртрах вӗҫлесе ҫитерме, государство умӗнчи обязательствӑсене срокченех пурнӑҫа кӗртме, пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пур енчен те пулӑшса пыма чӗнет.

— Ленин—Сталин партийӗ тавра, пирӗн тус тата атте Сталин юлташ тавра тата таччӑнрах пӗрлешер! Ленинӑн—Сталинӑн никам ҫӗнтерейми ялавӗпе малалла кайса, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ҫӗмӗрсе тӑкар. Нимӗҫ оккупанчӗсене—вилӗм!—тесе вӗҫлет хӑйӗн сӑмахне Габайдулин юлташ.

Колхозниксен ячӗпе Габайдулин юлташа колхозри стахановец Насретдинов юлташ ответлерӗ. Вӑл ҫапла каларӗ:

— Пирӗн ҫӗршыв йывӑр та хаяр кунсенче пурӑнать: Гитлерла вӑрӑ-хурахсем пирӗн ҫӗршыва шала кӗрсе кайрӗҫ. Ҫакӑн пек йывӑр самантра пирӗн нихҫанхинчен те тимлӗрех ӗҫлемелле, хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫара ытларах та ытларах пулӑшу памалла. Колхоз производствинче харпӑрхӑйне шеллемесӗр ӗҫленипе тӑван ҫӗршывӑн кашни пусӑмне сыхлама геройла Хӗрлӗ Ҫара пулӑшар!

Унтан митингра ВКП(б) Комсомольски райкомӗн секретарӗ Георгиев юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл колхозниксемпе колхозницӑсене тырпулсене пухса кӗртес, авӑн ҫапса пӗтерес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлеме, Октябрь уявне колхоз ӗҫӗнче пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас ӗҫе вӑйлатма чӗнчӗ.

Митингра пулнӑ колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсем ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илчӗҫ:

Кӗлтесене сентябрӗн 28-мӗшӗччен капана хывса пӗтермелле;

октябрӗн 20-мӗшӗччен авӑн ҫапса пӗтермелле;

государство умӗнчи обязательствӑсене ҫак кунсенчех парса татмалла;

выльӑх-чӗрлӗх фермисене комплектлас плана октябрӗн 15-мӗшӗччен пурнӑҫа кӗртмелле;

выльӑх витисене хӗле кӗме юсаса ҫитермелле;

кӗрхи ҫӗртме тумалли плана ирттерсе пурнӑҫа кӗртмелле.

Каҫхине Габайдулин юлташ Комсомольски районри интеллигентсемпе, ялсовечӗсен тата колхозсен председателӗсемпе тӗл пулчӗ. Вӗсем патӗнче вӑл хӗрӳллӗ сӑмах тухса каларӗ.

А. БРАНИЦЫН.

Парнесем хатӗрлетпӗр

КУКЕҪ. (**Телефонпа**). Заводской ялсоветӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне Октябрь уявӗ ячӗпе 120 килограмм какай, 240 ҫӑмарта, 25 кролик, 320 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 17 килограмм ҫу, 100 литр эрех ярса параҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех «Луга» колхоз пӗр вӑкӑр, пӗр центнер тулӑ ҫӑнӑхӗ, 10 килограмм ҫу, 2 килограмм пыл ярса парать. Колхозниксемпе колхозницӑсем те боецсем валли уяв парнисем хатӗрлеҫҫӗ. А. Петрова 0,5 килограмм, П. Федорова, М. Степанова 400-шер грамм ҫу, нумай пулмасть фронтран аманса таврӑннӑ Г. Ермаков пӗр килограмм пыл, Ф. Тимофеев пӗр автан ярса пама пулчӗҫ.

Т. ЛОГИНОВ.

Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисене—фронтовой салам

Май килнипе усӑ курса, Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисене фронтовой хӗрӳллӗ салам яратӑп. Фашистла ҫӗлен-калтасене тата хытӑрах ҫапӑп, хамӑр тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗшӗн, ирӗклӗхӗшӗн, никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тата лайӑхрах та вӑйлӑрах ҫапӑҫӑп тесе хамӑн тӑван Чӑваш республикине сӑмах паратӑп. Орденлӑ Чӑваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийӗ те нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене аркатса тӑкма Хӗрлӗ Ҫара тата лайӑхрах пулӑшса пырӗҫ, тылра хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр ӗҫлесе, ылханлӑ тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫе хатӗрлесе пырӗҫ тесе шанса тӑратӑп. Сывӑ пултӑр паттӑр Хӗрлӗ Ҫар! Сывӑ пултӑр полководец Сталин юлташ!

Совет Союзӗн Геройӗ, Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Г. ГАБАЙДУЛИН.

Совет Союзӗн Геройӗ Геннадий Габайдулин

Унӑн вӑрҫӑчченхи пурнӑҫӗ нихӑш енчен те уйрӑмӑн палӑрса тӑмасть. Геннадий Габайдулин Комсомольски районри Тукай ялӗнче 1914 ҫулта ҫуралнӑ. Ашшӗ-амӑшӗсем вӑтам хресченсем пулнӑ. Халӗ килте ватӑ амӑшӗ тата шкула ҫӳрекен шӑллӗ пурӑнаҫҫӗ. Ачаранпах вӑл хастар та ӗҫчен пулнӑ. Ялти пуҫламӑш шкула аван вӗренсе пӗтернӗ.

1934 ҫулта Горький хулине автозавода ӗҫлеме кайть, унта тӗрлӗ специальноҫсене (шофера, мотористa) вӗренет. Моротист пулса ӗҫлет. 1936 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑрать. Яланах отличник-боец.

1939 ҫулта Хӗрлӗ Ҫартан каллех Горькине таврӑнать, автозаводра ӗҫлет.

Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансан, вӑл хӑй ирӗкӗпе фронта кайма виҫӗ хутчен заявлени панӑ. 1941 ҫулти июлӗн 13-мӗшӗнче фронта кайнӑ, ӑна минометчиксен подразделенине янӑ; унта вӑл—подразделени командирӗн помощникӗ.

Малтан Ленинград облаҫӗнчи Старая Русса хули ҫывӑхӗнче ҫапӑҫнӑ. Вӗсен подразделенийӗ минометсенчен персе, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 5 пин ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче Габайдулин юлташ Ленинла—Сталинла парти ретне кӗнӗ.

Мускавшӑн хӑрушӑ кунсем ҫитсен, Командовани Габайдулин юлташа Мускава хӳтӗлеме ярать. Пӗр уйӑх хушши ҫапӑҫса, Габайдулин тӑракан подразделени 6 пин нимӗҫе пӗтерсе тӑкать, халӑх пурӑнакан ҫӗршер пункта нимӗҫ оккупанчӗсенчен тасатать.

Пӗр хула ҫывӑхӗнче вӗсен подразделенине нимӗҫсем ҫавӑрса илнӗ. Паттӑр совет воинӗсем парӑнман. Вӗсем тӑватӑ кунлӑх апат-ҫимӗҫпе пӗр уйӑх хушши тытӑнса тӑнӑ. Вӗсем хӑйсене пӗрре те ҫавӑрса илнӗ пек шутламан. Вӗсем ҫапӑҫнӑ, тӑшмана пӗрре те канӑҫ паман.

Габайдулин опытлӑ разведчик, сахал мар вӑл разведкӑна кайса паха сведенисем пухнӑ. Пӗррехинче Командовани Габайдулин юлташа нимӗҫсем вырнаҫнӑ М. ялне разведкӑна кайма приказ парать.

— Вилӗм куҫ умӗнче тӑрать пулсан, приказа пурнӑҫлама хушмастӑп,—тенӗ ӑна подразделени командирӗ. Анчах вӑл кӗскен:

— Вилетӗп, анчах приказа пурнӑҫлатӑп,—тесе ответленӗ.

Февралӗн сивӗ кунӗсенче Габайдулин юлташ 6 боецпа пӗрле разведкӑна тухса кайнӑ. Вӑрманпа пынӑ чухне, 4 нимӗҫ салтакне тӗл пулса вӗлернӗ хыҫҫӑн, малалла утнӑ. Вӑрмантан тухнӑ, М. ялӗ инҫе юлман. Анчах сисмен ҫӗртен советӑн ҫичӗ паттӑрӗ ҫине нимӗҫ фашисчӗсен ушкӑнӗ минометсенчен пеме тытӑннӑ, 5 гвардеец пуҫӗсене ҫавӑнта хунӑ. Габайдулин юлташ хӑйӗн тусӗпе, Первезенцев боецпа, иккӗшех тӑрса юлнӑ. Нимӗҫсем хытӑ пеме тытӑннӑ, пулеметчик Первезенцев та вилнӗ. 40 фашист Габайдулин патнелле ҫывхарса пынӑ, ӑна чӗррӗн тыткӑна илме шутланӑ. Паттӑр воинӑн пӗччен 40 фашистпа ҫапӑҫма тивнӗ. Анчах вӑл хӑраса ӳкмен. Нимӗҫсене хӑй ҫывӑхне 40 метра янӑ та, автоматран персе, вӗсене 2 хутчен ҫула-ҫула пӑрахнӑ. Ҫав вӑхӑтра Габайдулин хӑй те аманнӑ. Вӗри юн хулӗ тӑрӑх юхса анса алса ӑшне пӗвеннӗ. Ун патне чӗрӗ юлнӑ 4 нимӗҫ салтакӗ ҫывхарсах пынӑ, анчах автоматран пеме патрон пулман. Ыратнине пӑхмасӑрах хӑйӗн пистолетне авӑрласа чикнӗ. Паттӑр воин ҫухалса кайман, вилнӗ боецӑн автомачӗ патне шуса пынӑ та ҫак 4 фашиста та персе тураса тӑкнӑ. Анчах пур гитлеровецсене те пӗтерсе тӑкнине шанмасӑр вӑл хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ун хыҫӗнче икӗ утӑмра кӑна нимӗҫ офицерӗ, пистолета ҫӗклесе: «Рус, сдавайся!» тесе чӗтресе тӑнӑ. Габайдулин нимӗҫе автомат приклачӗпе вӗлерме шутланӑ, анчах леш пысӑк пулнӑ. Габайдулин, хӑйӗн пистолетне систермесӗр кӑларса, офицера персе вӗлернӗ. 40 ҫынҫиен—ганссемпе фрицсем хӑйсен вилӗмӗсене ҫав вырӑнта тупнӑ.

Нумаях та вӑхӑт иртмен, Габайдулин аманса выртнӑ вырӑна пирӗн боецсем ҫитнӗ. Суранланнӑскере землянкӑра вырнаҫнӑ госпитале илсе пынӑ. Унта ӑна 9 кун хушши йывӑр условисенче пурӑнма тивнӗ.

Командовани Габайдулинсен подразделенине тӑшманӑн уннине татса тухма приказ панӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче подразделени командирӗ вилет. Хӑйӗн 9 суранне пӑхмасӑрах, Габайдулин юлташ командование хӑй ҫине илет. Вӑл хамӑрӑн темиҫе ҫӗр воина тӑшманӑн уннинчен ӑнӑҫлӑн илсе тухать. Ҫавӑншӑн ӑна командовани тав тӑвать, Мускаври госпитале самолетпа ӑсатать.

Правительство Габайдулин юлташӑн паттӑр ӗҫне тивӗҫлипе хакларӗ. Ӑна Совет Союз Геройӗн званине пачӗ.

Комсомольски районри ӗҫҫыннисем паттӑр та хӑюллӑ землякпа тивӗҫлипе мухтанаҫҫӗ. Мухтав та чыс хӑюллӑ та паттӑр воина!

Т. КАРПОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче, Моздок районĕнче тата Синявино районĕнче хаярлăн çапăçнă. Ытти фронтсенче пăлă улшăнусем пулман.

* * *

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллери пĕр батарейине тата зенитлăй пулеметсен 8 точкине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне тата горючи пĕр складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе янă. Гвардеец-минометчиксем тăшман войскисем çине сасартăк вăйлăн персе нимĕç пехотин икĕ батальоне пĕтерсе тăкнă. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕнчи боецсем хаяр çапăçура 250 гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă, 5 орудине, 4 миномет, 7 пулемет пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Атăл çинчи çар флотилийĕн карапĕсен артиллерийĕ темиçе хутчен хăрăс персе нимĕçсен 8 орудийĕ [illegible]

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçса уйрăм пункчĕсене кăштах малалла куçнă. Противник ĕнер пирĕн часть йышăнса илнĕ пĕр высотана каялла туртса илме темиçе хутчен хăтланса пăхнă. Кун каçиччен гитлеровецсем 7 хут контратака тунă, вĕсене пирĕн боецсем противника пысăк çухатусем курсе сирсе янă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 35 танкне тата противникăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче противникăн танкĕсемпе пехотине совет артиллеристĕсемпе минометчиксем пысăк çухатусем курса каялла чакнă. Демин юлташăн орудийĕ расчечĕ тăшмана çывăхах янă та тĕл персе 12 танка сиенленĕ тата нимĕçсен автоматчикĕсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Наводчик Филимонин юлташ нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн минометчикĕсем противникăн пехотине икĕ взвода çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн часть хаяр çапăçусем хыççăн халăх пурăнакан пĕр пунктран тухса кайнă.

* * *

Синявино районĕнче пирĕн оборонăра савăлланса кĕме хăтланнă противника каялла çапăçнă. Старши сержантăн Морозăн танкĕ персе тата гусеницисемпе таптаса нимĕçсен 9 çăмăл танкне, 4 противотанковăй пăшалне расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă тата [illegible]

* * *

Противникăн тылĕнче кĕрешекен Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕ пысăк вăйлă нимĕç гарнизонне сĕмĕрсе тăкнă. Пĕр çапăçура 40 ытла гитлеровеца тата бронемашине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансем пĕр çăмăл автомобиль тата икĕ грузовой машина пĕтерсе тăкнă, противникăн 10 салтакне 6 офицерне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 295-мĕш пехотнăй дивизийĕн 518-мĕш полкĕн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Руди Григсман çапла каласа панă: «Вăрçă пуçланнăранпа 9-мĕш рота Хĕвелтухăç фронтĕнче вилнĕ салтаксен шучĕ пĕр батальона çитет. Ротăна темиçе хутчен çĕнĕ салтаксем хуша-хуша панă, анчах та вĕсем нумайлăха пыман. Юлашки çапăçусенче пирĕн дивизин командирне —генерал-майора Гейтнера вĕлернĕ. Командовани Германи халăхĕнчен нимĕç войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тӳссе пыракан çухатусене пытарса тăма хăтланать. Анчах та чăнлăха пытарма çук ăна. Нумайĕшĕ вĕсен тăванĕсем е çывăх çыннисем фронтра пĕтни çинчен калакан пĕлтерӳсем илеççĕ. Аманнă салтаксен поезчĕсем пĕр вĕçĕмсĕр пырса тăни халăха Германи командованийĕн суя сводкисем каланинчен нумай ытларах калать. Манăн савни Меранра пир-авăр фабрикинче ткачиха пулса ĕçлет. Вăл ман пата çав пĕчĕк хулари мĕнпур шкулсене пурне те тата частнăй çуртсене те нумайĕшне госпитальсем туни çинчен çырать. Çав госпитальсемпе лазаретсем аманнă салтаксемпе лăках тулса ларнă».

* * *

Октябрьти социализмлă Аслă революци уявĕ çывăхарса килнĕ май, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем валли парнесем хатĕрлеме пуçларĕç. Азербайджан республикинче çавăн пек парнесем 12 вагон пухнă, Бурят-Монгол республикинче — 15 вагон, Киргиз республикинче 4 вагон, Мордва республикинче—2 вагон т. ыт. те. Парнесем шутĕнче—ăшă тумтирсем, табак, папирос, эрех, печени, алшишсем, супăнь тата яланах кирлĕ пулакан ытти япаласем те. Ĕççыннисем кашни посылка ăшне тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем патне çырнă çырусем чиксе яраççĕ. Парнесем пухасси çавăн пекех тата ытти республикăсемпе облаçсенче те анлăн сарăлса пырать.

Сентябрĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 25-мĕшĕ ыран тунă çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче, Моздок районĕнче тата Синявино районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче пăлă улшăнусем пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Н-ски часть урамри çапăçура 200 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 5 танкне, 3 противотанковăй орудине тата 4 минометне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем хăшпĕр çуртсене ирсе кайса пирĕн часть фланкне хăратса тăма пултарнă. Совет боецĕсем контратака тунă та хăйсен позицийĕсене каялла тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн минометчиксем войскăсемпе боеприпассем тиенĕ 12 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, 3 танка çунтарса янă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире янă. Н-ски чаçăн танкисчĕсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 2 йывăр танкне тата гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçурах нимĕçсенчен 6 миномет, 20 пулемет, 100 винтовка ытла, 2 радиостанци, 1.500 мина тата 10.000 патрон тытса илнĕ. Халăх пурăнакан Р. пункчĕ патĕнчи çапăçура пирĕн боецсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Моздок районĕнче противникăн танкĕсемпе автоматчикĕсем пирĕн оборонине çĕмĕрсе кĕме хăтланнă. Гитлеровецсен пĕр атакисене те сирсе янă. Çапăçура 8 танк, 15 автомашина тата 200 нимĕç автоматчикне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн конница румынсен пехотин батальоне аркатса тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем пĕлтерĕшлĕ çапăçусем пынă. Гвардии старши лейтенанчĕ Провăторов ертсе пыракан боецсем 4 танк персе çапса шăтарнă тата нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллерипе минометсем икĕ кун хушшинче тăшманăн 26 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, 10 автомашина тата темиçе станковăй пулеметпа миномет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн снайперсем противникăн 200 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ.

* * *

Брянскпа Гомель хушшинчи чугунçул çинче вицĕ эрне хушшинче партизансен отрячĕсем противникăн çар грузĕсемпе войскăсем турттарса пыракан 5 поездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Аяларахра словаксен пĕрремĕш моторизованнăй дивизийĕнчи артиллери полкĕн 8-мĕш батарейинчи ефрейторăн Михаил Мудракăн çырса панă заявленине пичетлетпĕр: «Нимĕçсем совет халăхне тата тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискеррĕн тыткалани çинчен каласа пама кирлĕ тесе шутлатăп эпĕ. Акă мĕн пулнă Днепропетровскра. Унта хĕлĕпех тыткăна лекнĕ красноармеецсем валли тунă концентрациллĕ лагерь пулнă. Çав лагерьте сивĕпе тата выçăпа куллен 5—8-шар çын вилнĕ. Нимĕçсем тыткăна лекнĕ вырăссене пĕчĕк айăпсемшĕнех вуншарăн пере-пере вĕлеретчĕç. Çав лагерьти çынсенчен çурри ытла пĕтнĕ. Эпĕ тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене урампа илсе пынине куртăм. Вĕсем выçăччĕ, граждансенчен мĕн те пулин пама ыйтатчĕç. Хăшпĕр хĕрарăмсем сухарисем илсе тухнăччĕ, анчах та нимĕç салтакĕсем вĕсене çывăха ямарĕç. Тыткăна лекнисенчен пĕри пĕр хĕрарăм пăрахнă çăкăр татăкне пĕшкĕнсе илме хăтланчĕ. Нимĕç салтакĕ ăна çавăнтах персе вĕлерчĕ.

Эпĕ çав бандитла таборта урăх пурăнма пултараймарăм, эпĕ хам ирĕкпех Хĕрлĕ Çар енне куçрăм. Эпĕ Хĕрлĕ Çарăн командованинчен мана алла хĕçпăшал тытса нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе—славян халăхĕсен çав чи усал тăшманĕсемпе çапăçма ирĕк пама ыйтатăп. Словаксен пĕррремĕш мотодивизийĕнчи артиллери полкĕн 8-мĕш батарейинчи ефрейтор Михаил Мудрак».

* * *

Сентябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче Линц хули патĕнче тыткăнри французсен ушкăнĕ нимĕç хуралне тапăннă та, 7 гитлеровеца вĕлерсе, тусем хушшине тарнă. Тыткăнри французсем тарни çинчен ытти районсенчен те пĕлтереççĕ. Çак кунсенче лагерьсенчен тарса кайнă французсен пысăк отрячĕ Югославие çитнĕ те унта партизансем çумне хутшăннă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Çулталăк планне тултарнă

ВĂРМАР, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика (директорĕ Горбунов, завком председателĕ Павлов, парторганизаци секретарĕ Семенов юлташсем) Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне планран ирттерсе 25 процент чухлĕ продукци кăларма, декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне çулталăк планне 135 процент тултарма обязательство илнĕ.

Фабрика коллективĕ паянхи кун тĕлне çулталăк планне ирттерсе тултарнă. Ăмăртăва хутшăннă хыççăн, механизациллĕ майпа йывăçран япаласем туса кăларакан цех начальникĕ Лазарев, старши мастер Сергеев татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Стахановка-сверловщица Е. Голубева нормăна 190 процент, С. Елизарова 182—200 процент, упаковщицăсем Д. Павлова, Н. Кириллова 250—280 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Артельри ăмăрту

КАНАШ. Сентябрĕн 25-мĕш. (Телефонпа). Канашри «Авангард» артель коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне 20 процент ӳстерме, таварсен хакне 2 процент чухлĕ чакарма обязательство илнĕ. Кунсăр пуçне артель коллективĕ сентябрь уйăхĕнче 234 пин тенкĕ вырăнне 255 пин тенкĕлĕх, октябрь уйăхĕнче 235 пин тенкĕ вырăнне 300 пин тенкĕлĕх продукци кăларма йышăннă.

Артельре ĕçлекенсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлесе, çулталăк планне Октябрь уявĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарса, декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне çулталăк планĕнчен ирттерсе 200 пин тенкĕлĕх продукци кăларма, производствăри учетпа отчет ĕçне тĕрĕс йĕркелеме, вĕренекенсен ретĕнчен 20 çынна мастерсен ретне куçарма пулнă. Çак обязательствăсене пурнăçлассишĕн халь артельре кĕрешӳ пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ÇĔРПУ. (Телефонпа). Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне районĕпе сурăх тирĕсем 260, çăм 59 килограмм, кĕрĕк пиншаксем 39, ăшă жилетсем 6, мулаххайсем 42, çăматăсем 3 мăшăр, алшишсем 18 мăшăр, носкисем 5 мăшăр, телогрейкăсем 3, ваткăллă брюкисем 11, портянкăсем 22 мăшăр, ăшă кĕпе-йĕм 6 мăшăр, кальсонсем 7, аялтан тăхăнмалли кĕпесем 7, простыньсем 10, минтер пичĕсем 7, алшăллисем 32, мулкачă тирĕсем 68 пухнă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе «Молодая сила» колхозра (комисси председателĕ ВКП(б) членĕ Музалов юлташ) лайăх организацилене. Унта 68 тир, 8 килограмм çăм, 2 мăшăр портянка пухнă. Çавăн пекех ку ĕçе «Оборона» (председателĕ Алексеев юлташ), «Куганар» (председателĕ М. Лукин юлташ), «1-ое мая» колхозсенче тимлесе тытăннă.

Çакăнпа пĕрлех ку ĕç, районĕпе илсен, çителĕксĕр пуxса пырать-ха. Уйрăм колхозсенче ăшă тумтирсем пухма паян кунччен те тытăнман. Сăмахран, Чупай Çĕньялти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра ку ĕçе организацилемен. Колхоз председателĕ коммунист Марков хăй те пĕр япала та паман. Çавăн пекех Пĕрремĕш Вăрманкас ялсовечĕн исполком председателĕ Андреев, Ершипоç ялсовечĕн исполком председателĕ Михайлов юлташсем çак ĕçе пачах хутшăнман, хăйсем те нимĕнле япала та паман.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатмалла. Ку ĕçре ялсоветсемпе колхозсен руководителĕсен ыттисене пример кăтартмалла.

В. ФАДЕЕВ,
ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

* * *

СĔНТЕР, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Юлашки 5 уйăх хушшинче колхозниксемпе ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 532 кĕрĕк пиншак, 224 тир, 717 метр пир, 37 мăшăр перчатка, 200 килограмм ытла çăм хатĕрленĕ.

Ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах «Гигант», «Свобода», «Красное Сормово», «Колос» колхозсенчи колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ. «Свобода» колхоз членĕсем боецсем валли 32 тир, 13 килограмм çăм, 44 метр пир, «Красное Сормово» колхоз членĕсем 15 тир, 24 килограмм çăм, 18 метр пир тата ытти япаласем те пухса панă.

Пĕтĕмĕшпе илсен районра ăшă япаласем пухас ĕç çителĕклĕх пулса пымасть-ха. Хăшпĕр ялсоветсенчи колхозсем боецсем валли ăшă япаласем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. Шомик, Ярославка, Тепте т. ыт. ялсовечĕсенчи уйрăм колхозсем ку енĕпе пачах ĕçлемеççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Ют çĕршывсенче

Америкăри рабочисем—Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсене

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Чикагори ялхуçалăх машинисем тăвакан рабочисен профсоюзĕн съезчĕ Сталинградри рабочисене саламлă телеграмма янă. Çав телеграммăра çапла каланă: «Паттăр халăха тата пирĕн тăвансене, Сталинградри трактор промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисене, питех те пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, этемлĕхĕн тăшманĕ çавăрса илнĕ крепоçне хăйсен аллинче тытса тăракансккерсене—салам. Эпир, ялхуçалăх машинисем тăвакан рабочисем, нациллĕ профсоюз тăвас тата унăн программипе политикине, гитлеризма хирĕç пыракан пĕтĕм тĕнчери вăрçа пире ытларах хутшăнтарма тивĕçлĕскерсене, палăртса хурас тесе съезда пухăнтăмăр. Эпир сирĕн хулана, сирĕн çĕршывăра, пирĕн пĕрлехи ĕçе чаплăн хӳтĕлекенсене хĕрӳллĕн саламлатпăр».

Телеграммăра Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсем пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсен ĕçне хӳтĕленине кăтартса панă. Пирĕн съезд, тенĕ çав телеграммăра малалла, сире пулăшас тесе, çав вăхăтрах тата хамăрăн халăха вăраха пыракан вăрçăн йывăр асапĕсенчен хăтарас тесе, президента тата верховнăй главнокомандующине Рузвельта Европăра иккĕмĕш фронт уçассине хăвăртлатма чĕнсе резолюци йышăнтăмăр. Пире сирĕн хастарлăхăр хавхалантарать. Сирĕнпе пĕрле эпир тăшмана çĕнтерме çунса тăратпăр».

КАНАДĂРИ ПРОФСОЮЗСЕН С'ЕЗЧĔ

С'езд иккĕмĕш фронта уçма чĕнет

ОТТАВА, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Оттавăра пĕтĕм Канадăри Ĕç Конгресĕн (Канадăри профсоюзсен пĕрлешĕвĕн) съезчĕ уçăлнă. Çав съездра 500 делегат ытла. Съезда рабочи движенийĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе 150 резолюци ытла тăратнă.

Съездра иккĕмĕш фронт çинчен те сӳтсе-явнă. Çав ыйтупа тĕрлĕ профсоюзсем 20 резолюци ытла тăратнă. Съездра тухса каланă делегатсем, иккĕмĕш фронта уçни тăшмана çĕнтерме кирлĕ услови пулса тăрать тесе шутласа, çав иккĕмĕш фронта часрах уçма сĕннĕ. Делегатсем çакна палăртса каланă: рабочи класшăн «иккĕмĕш фронт пĕрремĕш номерлĕ ыйту, фашизма çĕнтермелли май пулса тăрать», тенĕ.

Люксембург халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Люксембургăн ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Беш тата Люксембургран нумаях пулмасть тарса тухнă çамрăк патриот Версель нимĕçсем Люксембургра çавтери хăрушла тискер ĕçсем туни çинчен тата халăх оккупантсене хирĕç кĕрешни çинчен каласа панă.

Нумаях пулмасть,— тенĕ Беш,—нимĕçсем Люксембурга Германи империне кĕртнĕ. Çакна ăна захватчиксем 1941 çулти октябрьте туса иртернĕ перепиç Люксембургри халăхăн 97 проценчĕ хăйсене нимĕç тесе йышăнма килĕшмен пулин те тата, гитлерла террора пăхмасăрах, «мĕнле халăхран» текен графара çынсем «люксембуржец» тесе, «мĕнле чĕлхе» текен графара—«Люксембург чĕлхи» тесе çырнă пулин те çапла тунă. Люксембургăн патриотла деятелĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тыткалаççĕ, анчах та кашни вилекен патриот вырăнне ыттисем йышăнаççĕ, вĕсем унăн ĕçне малалла туса пыраççĕ.

Пиншер çынсене хăйсен çемьисемпе тусĕсенчен пĕр хĕрхенмесĕр уйăрса хĕвелтухăçне ăсатнă. Кунта вĕсене йывăр шăпа кĕтсе тăрать.

Çапах та, тенĕ малалла Беш, 300 пин çынлă халăх Германин 70 миллионлă халăхне хирĕç паттăррăн тăрать. Люксембурга ирĕксĕрлесе Германи çумне «пĕрлештернине» хирĕç халăх пĕтĕмĕшлĕ забастовка пуçласа янипе ответлерĕ. Забастовка сăрт-ту промышленноçлă районсенчен ялхуçалăх районĕсене хăвăрттăн сарăлчĕ. Çакă вăл рабочисемпе хресченсем тата хулара пурăнакан çынсем пĕрлĕхлĕ пулнине кăтартса паракан хăватлă демонстраци пулса тăрать. Нимĕçсем вăрçă вăхăтĕнчи законсене ĕçе кĕртнĕ. Халăха питех те хытă айăпласа асаплантараççĕ, анчах люксембуржецсем парăнмаççĕ.

Çамрăк патриот Версель çапла каланă: «Люксембургри патриотла вăрттăн движени гитлеровецсем пирĕн çĕршыва пырса кĕрсенех пуçланнă. Пирĕн хамăрăн мĕнпур вăйсене активлăн та хăюллăн кĕрешмешкĕн пĕрлештерме кирлине эпир пĕлнĕ. Вицĕ эсэсовеца персе пăрахнă, унтан вара хăй те пĕрĕнсе вилнĕ Раймонд Пти геройăн ячĕ легендăллă ят пулса тăчĕ. Вăл пирĕн халăхăн геройĕ пулчĕ».

Гитлеровец Лей „шалти фронтран“ хăрать

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем «шалти фронтăн» çирĕплĕхĕ пирки иккĕленнине гитлеровецсен пĕр пуçлăхĕн Лейăн «Ангрифф» хаçатра пичетлесе кăларнă статьи лайăх кăтартать. «Халăх хушшинче хирĕçӳсемпе калаçусем пулма пултарассине пĕтерсе лартма тăрăшмаллине» Лей вăйлăн палăртать. Вăл пĕр вăтанмасăр çакна йышăнать: Германире рабочисемпе тата работницăсемпе хаяр чĕлхепе калаçаççĕ, тет. «Нацистла ĕçрен пăрăнакан пĕр нимĕç те пулмалла мар,—тесе сухăрать Лей.—Халăх уйăрălса кайни кирек хăшĕ те вилĕмпе пĕрех».

Лей хăй нимĕç тылĕ пирки мĕншĕн пăшăрханнине астумасăр каласа ярать. Ăна нимĕçсем хăйсем çĕнтерессине ĕненменни ӳссе пыни хăратать. Вăл çавăнпа та пĕтĕм вăя ĕçе хума чĕнет. «Пире тĕнчери пĕрремĕш çапăçура çĕнтерни çитмест. Юлашки çапăçура та çĕнтермелле»,—тесе çырать вăл. Лей çынсене çĕнĕ асапсемпе жертвăсем тӳсме чĕнет, «Германин вăйпа хатĕрсем çитменнине пула парăнмалла пулса ан тăтăр», тет.

Англи авиацийĕ Германие тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ çĕрле йывăр бомбардировщиксем Çурçĕр тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири чылай объектсене, çав шутра Фленсбургри суднăсем тăвакан верфьсене те тапăннă. Çыранри оборона самолечĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче противникăн вицĕ суднине сиенленĕ. Çав операцисенчен каялла 10 самолет таврăнман.

Индири лару-тăру

ДЕЛИ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Индире чылай районсенче студентсен демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Демонстрантсене чылайĕшне арестленĕ. Тăвата чугунçул станцине вут тивертнине палăртнă.

Мадрасс провинцийĕнче пухăннă халăх тăвар кăларакан вырăнсене тапăннă. Каунпурта тата Пунăра студентсем забастовка тунă та учебнăй заведенисене çӳреме чарăннă. Каттекра чылай учебнăй заведенисене паллăмар вăхăтлăха хупнă.

Майсорта çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: сентябрĕн 27-мĕшĕччен пыман студентсене пурне те учебнăй заведенисенчен кăларса яраççĕ, тенĕ.

Бенглорти пир-авăр фабрикисенче нумайĕшĕнче рабочисем забастовка тунă.

Францири вăрттăн листовкăсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хирĕç тăракан халăхăн организацийĕсем Францире саракан пĕр листовкăра çапла каланă: «Рабочисем, нимĕçсен çар промышленноçĕнче саботажсем тăвăр. Гитлер Германи халăхне халран яракан хăвăртлăхпа ĕçлеттерет пулин те, çĕнтерме кирлĕ чухлĕ хĕçпăшал туса хатĕрлеме пултараймарĕ. Халĕ вăл нимĕç халăхне лăплантармашкăн тата поражени тӳсессине тепĕр вăхăта хăвармашкăн чуралантарнă Европа уншăн ĕçлесе тăрасси çине шанать. Кашни пăснă деталь, ĕç вăхăтĕнче простой тунă кашни минута вăрçăри çынсен пурнăçне çăлса хăварать. Францин оккупациленĕ зонинчи патриотсенчен пример илĕр, Бельгирен, Голландирен пример илĕр, ирĕк чĕрелле çынсенчен пуринчен те пример илĕр. Хăвăр ĕçлекен заводра Виши правительстви Германие яма хатĕрлекен продукцие туса кăларма чăрмантартăр. Машина, инструмент юсавлă тăманни, çемçетсе янă гайка, консерва коробкинчи шăтăк-çурăк—çаксем Германие поражени çитсе çапас вăхăта çывăхартаççĕ», тенĕ.

КĔСКЕН

● Германин Францири оккупациллĕ çарĕсен командующийĕ Штюльпнагель нимĕçсен икĕ полицейскине тапăннăшăн тавăрма французсен тата 120 заложникне тытса хупма приказ панă.

● Бейрутра де-Голльпе Сири правительстви хушшинче çав икĕ çĕршыв пĕр-перинпе тачăрах пĕрлешсе ĕçлесси çинчен пынă калаçусем вĕçленнĕ.

● Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Куба çарпа тинĕс-çар тĕлĕшĕнчен пĕр-перинпе çыхăнса ĕçлес тĕлĕшпе çĕнĕ договор çырса алă пуснă.

● Алюмини çитменни ытла та аптăратнă пирки, Германире приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, алюминирен тунă япаласене пурне те конфискацилеççĕ. Ун пек япаласене пытарса хăварнăшăн государствăна хирĕç тунă преступлени те пĕр тана хурса айăплаççĕ. Пичетре пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем хăйсен пур «союзникĕсене» те çавăн пек тума хушнă. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Земляксен çырăвĕсем

Кунта эпир тăван яла, тăван республикăна хӳтĕлетпĕр

Поезд çине ларсан, эпир чылай вăхăт хушши Шупашкар çине, унăн йĕри-тавралăхне пăхрăмăр. Хула урлă Аслă Атăл курăнчĕ, унăн хумĕсем калаçса юхни илтĕнчĕ.

Пирĕн поезд ыткăннăçемĕн малалла ыткăнчĕ. Тăван çĕршыва, çуралнă çĕршыва юратни вара тата хăвăртрах тата аслăнрах сарăлса пычĕ.

Эпĕ унчухне хамăн çывăх тусăм çине, И. Е. Попов çине пăхса илтĕм. Вăл калама çук усă кăмăлласкер, темшĕн, тен кăмăлĕ хуçăлнипе, вагон чӳречи витĕр тарăн шухăша кайса пăхса пыратчĕ.

— Ну, мĕн эсĕ, Ваня, —терĕм эпĕ ăна,—çамрăк арăмна шеллетĕн-и мĕн?

— Çук,—терĕ вăл унчухне,—çак ыттăн тулă уйне пăхса пыратăп та пĕтĕм чĕрем кăкăрăма килсе тăвăлать: нивушлĕ фашист килсе таптĕ çак çĕре?.. Çук, Улатимĕр абзы, чунăм тухмасăр нимле фашиста та çак çĕр çине ярас çук эпир...

Иван Попов чăнах та хăй сăмахне çирĕп тытрĕ. Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче, тăшман аслă Мускава пырса кĕме ĕмĕтленсе хаяррăн тапăнса пынă вăхăтра, пире тăшман çулне пӳлме Малоярославец патне тухса тăма тиврĕ. Çавăнти вăйлă çапăçуран связной Попов тухмарĕ вара.

Эпĕ шултăра калибрлă миномет çинчен илтменччĕ. Çар шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, эпĕ темиçе расчета миномет çинчен вĕрентрĕм. Çав расчетсемпех халĕ Хĕвеланăç фронтне, тăшман умне, сухаран сухана тытăçма тенĕ пек, татăклă çапăçăва килсе тухрăм.

Юлташăн айăпсăр юхакан тумлам юнне курсан, тăшманăн тинĕс пек юхакан юнне курас килет. Эпĕ П. станцинче пĕр юлташа куртăм. Икĕ ури вицĕ çĕртен шалтăрах хуçăлнă. Сылтăм аллине чавсинчен çӳлерех икĕ пӳрне сарлакĕш юлнă ӳт кăшт тытса тăрать. Сылтăм кăкăрĕн ӳтне пĕр аллаппи сарлакĕш ытла осколок чавса илнĕ. Янахĕ айĕнче тем пысăкĕш шăтăк ка-рăнса тăрать.

Ăçтан чăтса тăратăн çакăн пек тискер вилĕмпе вилнĕ юлташсене курсан? Вĕсен юнĕн кашни тумламĕ пире малтан мала, хаяр тăшман çине ыткăнма чĕнчĕ... Эпир ыткăнтăмăр. Инçе юлмарĕç вăхăтсем. Тăшман çĕрĕ çине, татса кайнă пысăк пĕве шывĕ пек, кĕрлесе кĕрĕпĕр эпир.

Пĕчĕк ача юратăвĕ амăшне епле юратнине хут çине çырса кăтартма никам та вăй çитерес çук. Нимĕçсенчен тасатнă ялсенчи пĕчĕк ачасем пире хăйсен тăван амăшне юратнипе пĕрех юратаççĕ. Эпир чугунçулпа пынă чухне çул хĕрринче пĕр ушкăн ачасем тăнине куртăмăр. Кашниех вĕсем пĕрер çыхă çарăк тытнă. Поезд хуллентрех шунă вăхăтра çарăк çыххисене вагон ăшне пересçĕ. Пенĕ çарăк çыххи вагона ӳкеймесен, е тытса ĕлкĕреймесен, кăмăлсăр пулаççĕ.

Тата маларах кайсан, тен, пĕр эрне çеç маларах ытарма çук çурт пулнă вырăнта, кирпĕчĕ купи çинче пĕр вицĕ тăвата çулхи ача тăнине куртăмăр. Такам вĕрентнĕ пулас ăна: вăл пĕчĕк аллисемпе сулса ăсатать пире. Пĕлме çук, тен çав ятсăр ача тăракан кирпĕчĕ купи çинче унăн пĕчĕк пиччĕшĕпе аппăшĕ, е амăшĕ ĕмĕрлĕхе юлнă пулĕ? Вĕсене фашистсен хура хĕреслĕ хура çăханĕсем çавăнта хăварнă пулĕ! Çарăк паракан ачасене эпир консервă парса хăвартăмăр. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, тенĕ. Пĕччен тăракан пĕчĕк ачана тахăшĕ-пĕри пачка печени тыттарма ĕлкĕрчĕ.

Тула облаçĕн хĕвеланăç чиккинчи Гремячево ятлă ялта пире пĕр хĕрарăм çак историе каласа пачĕ. Вĕсен ялĕнче нимĕçсем икĕ уйăха яхăн пурăннă. Çав хушăра вĕсем темле тискер ĕçсем тума та ĕлкĕрнĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене пусса çинĕ, юлашки турам çăкăра туртса илнĕ, хĕрсемпе арăмсенчен мăшкăлласа кулнă. Ялта ĕçе юрăхлă çынсене (хĕрарăмсемпе стариксене) ирĕксĕрлесе ĕçе кăларнă. Эхер те камăн та пулсан пĕчĕк ачи амăшне ĕçе кайма чăрмантарнă пулсан, çав ачасене пĕр урамри пусса мĕн туличченех тултарнă. Хăшне-пĕрне хĕрарăмсем кĕпе çума каснă вакка янă.

Çак сăмахсене илтме те йывăр. Чĕре тăвăлса килет. Хамăрăн атте-аннесен, аппа-йăмăксен, пичче-шăллăмсен, хурăнташ-ăрусен, тăван халăхсен, пĕтĕм тус-йышсен юхнă куççулĕсемпе юнĕсемшĕн, юратнă тăван çĕршывшăн—хаяр араслан пек çапăçса вилме пĕрре те хăрушă мар!

Лейтенант В. БАРАЕВ.
ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11543 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6 58 24 п. н.